25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 ОКТЯБРЬ 11 ВЫРСАРНИКУН 238 (6179) №

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

СССР Верховный Совет Президиумĕн УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çарта çирĕп единоначали тăвасси тата военнăй комиссарсен институтне пăрахăçа кăларасси çинчен

Хĕрлĕ Çарта граждан вăрçи вăхăтĕнче тунă военнăй комиссарсен системи командирсен кадрĕсене хăшпĕр тĕлĕшрен шансах çитереймен пирки пулса тăнă, — вĕсен составне кивĕ çар специалисчĕсене, Совет влаçĕ çирĕппине ун чухне ĕненменскерсене тата Совет влаçĕшĕн ют пулса тăраканскерсене те, явăçтарнă пулнă. Граждан вăрçи çулĕсенче военнăй комиссарсем Хĕрлĕ Çара çирĕплетес тата командирсен составне суйласа илес ĕçре, Хĕрлĕ Çара политика тĕлĕшĕнчен вĕрентес тата çар дисциплинине вырăна лартас ĕçре татăклă вырăн йышăнса тăчĕç.

Граждан вăрçи хыççăнхи çулсенче командирсен кадрĕсене вĕрентсе, воспитани парса çитĕнтерес ĕç малалла пулса пычĕ. Çавна пула тата совет стройĕ пурнăçăн пур енĕсенче те çитĕнÿсемпе çĕнтерÿсем туса пынине пула командирсен кадрĕсем тĕлĕшпе Хĕрлĕ Çарта ĕç тĕпренех улшăнчĕ.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан отечественнăй аслă вăрçă пирĕн командирсен кадрĕсене вĕрентсе пиçĕхтерчĕ, çĕнĕ талантлă командирсен, çапăçусенче тĕрĕсленнĕскерсен тата хăйсен çар тивĕçлĕхĕпе командирăн чыслăхне вĕçне çитиччен тÿрре кăларнăскерсен, анлă сийне çитĕнтерчĕ. Тăшмана хирĕç пыракан хаяр çапăçусенче Хĕрлĕ Çарăн командирĕсем хамăрăн тăван çĕршыва чĕререн парăннине кăтартса пачĕç, кучухнехи вăрçăн чылай пысăк опытне туянчĕç, çарпа политика тĕлĕшĕнчен ÿссе тĕреклени ĕç.

Тепĕр енчен, военнăй комиссарсемпе политработниксем те хăйсен вăрçă ĕçĕнчи пĕлĕвĕсене ÿстерчĕç, кучухнехи вăрçăн пуян опытне туянчĕç, вĕсенчен пĕр пайне командăй должноçсене куçарнă та ĕнтĕ, вĕсем войскăсене ăнăçлăн ертсе пыраççĕ, ыттисемпе те нумайĕшĕсемпе командăй должноçсенче е халех усă курма пулать, е çар ĕçне тивĕçлĕ пек вĕрентсе хатĕрленĕ хыççăн усă курма пулать.

Пирĕн командирсемпе политикăллă кадрсем ÿснипе сыхăнса тăракан çак мĕнпур çĕнĕ обстоятельствăсем военнăй комиссарсен системине тытса тămalli сăлтав пĕтĕмĕшпех пĕтнине кăтартса параççĕ. Кунтан та ытларах, военнăй комиссарсен институчĕ малалла та пулни войскăсене ертсе пырассине лайăхлатас ĕçе чăрмав кÿме пултарать, комиссарсемшĕн хăйсемшĕн вара тĕрĕс мар положени туса хурать.

Çапла ĕнтĕ, Хĕрлĕ Çарта военнăй комиссарсен институтне пăрахăçа кăларма кирли, çирĕп единоначали тума кирли тата войскăсенчи ĕçĕн мĕнпур енĕсемшĕн ответлăха пĕтĕмĕшпех командирсем çине хума кирли тухса тăчĕ.

Çакна шута илсе, СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ **çапла йышăнать:**

1. Хĕрлĕ Çарта çирĕп единоначали тăвас тата Хĕрлĕ Çар чаçĕсен, соединенийĕсен, учреждениийĕсен боевой тата политикăллă пурнăçĕн мĕнпур енĕсемшĕн ответлăха пĕтĕмĕшпех командирсем (начальниксем) çине хурас.
2. Хĕрлĕ Çарăн соединенийĕсенче, чаçĕсенче, штабĕсенче, çар ĕçне вĕрентекен заведенисенче, Оборона Халăх Комиссариачĕн центральнăй тата главнăй управленийĕсенче, Хĕрлĕ Çарăн учреждениийĕсенче — военнăй комиссарсен институтне, подразделенисенче вара—политикăллă руководительсен институтне пăрахăçа кăларас.
3. Хĕрлĕ Çарăн соединенийĕсенче, чаçĕсенче, штабĕсенче, подразделенийĕсенче, çар ĕçне вĕрентекен заведенисенче, Оборона Халăх Комиссариачĕн центральнăй тата главнăй управленийĕсенче, Хĕрлĕ Çарăн учреждениийĕсенче командирсен политика енĕпе ĕçлекен заместителĕсен институтне тăвас.
4. Вăрçă тĕлĕшпе ытларах хатĕрленнĕ тата кучухнехи вăрçăн опытне туяннă военнăй комиссарсемпе политработниксене командăй должноçсене куçарас ĕçе вăйлатас.
5. Командирсен политика енĕпе ĕçлекен заместителĕсем валли тата политикăллă ытти мĕнпур работниксем валли çар званийĕсемпе уйрăмлăх знакĕсене Хĕрлĕ Çарти мĕнпур командирсем валли тунă çар званийĕсемпе уйрăмлăх знакĕсемпе пĕр пекех тăвас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулти октябрĕн 9-мĕшĕ.

Оборона Халăх Комиссарĕн ПРИКАЗĔ

1942 çулти октябрĕн 9-мĕшĕ. № 307. Мускав хули

Хĕрлĕ Çарта çирĕп единоначали тăвасси тата военнăй комиссарсен институтне пăрахăçа кăларасси çинчен

СССР Верховный Совет Президиумĕ 1942 çулти октябрĕн 9-мĕшĕнче «Хĕрлĕ Çарта çирĕп единоначали тăвасси тата военнăй комиссарсен институтне пăрахăçа кăларасси çинчен» йышăннă Указ тăрăх, çакăн пек **приказ паратăп:**

1. Чаçсен, соединенисен, штабсен, çар ĕçне вĕрентекен заведенисен, Оборона Халăх Комиссариачĕн центральнăй тата главнăй Управленийĕсен тата Хĕрлĕ Çарăн ытти учрежденийĕсен комиссарĕсене, çавăн пекех тата подразделенисенчи политруксене вĕсем халĕ йышăнакан ĕçсенчен хăтарас, вĕсене тивĕçлĕ командирсен (начальниксен) политика енĕпе ĕçлекен заместителĕсем пулма уйăрса лартас.
2. Фронтсен тата армисен Военнăй Совечĕсене, вĕсене панă правăсем тăрăх, пĕр уйăхлă срок хушшинче политика работникĕсене командăй çар званийĕсем пама хушас.

Фронтсен Военнăй Совечĕсене, 1942 çулти ноябрĕн 15-мĕшĕнчен кая юлмасăр, политика работникĕсене, старши батальоннăй комиссартан пуçласа унтан аслăраххисене, командăй çар званийĕсем пама Хĕрлĕ Çарăн Политикăллă Главнăй Управленийĕ урлă Оборона Наркоматне аттестаци материалне тăратма хушас.

3. Соединенисен командирĕсене тата армисемпе фронтсен Военнăй Совечĕсене вăрçă тĕлĕшпе лайăхрах хатĕрленсе çитнĕ политработниксене командирсем пулма, уйрăмăнах рота командирĕ тата батальон командирĕ пулма, хăюллăнрах уйăрса лартма хушас.
4. Фронтсен Военнăй Совечĕсене кăçалхи октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне фронтсенче командирсене вĕрентмелли икĕ уйăхлă курссем организацилеме хушас, çав курссенче командирсем пулма ытларах пултаракан политработниксем 150—250 çын вĕренмелле, вăл курссенче рота командирĕсене хатĕрлемелле. Курсра вĕренмелли политработниксене Хĕрлĕ Çарăн Политикăллă Главнăй Управленийĕпе килĕшсе суйласа илмелле.
5. Хĕрлĕ Çарăн кадрсен Управленине, кăçалхи ноябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа, «Выстрел» ятлă курссем çумĕнче вăрçă ĕçне лайăхрах вĕренсе çитнĕ комиссарсемпе политработниксене вĕрентсе полк командирĕсем пулма 200 çынна тата батальон командирĕсем пулма 600 çынна хатĕрлес тĕлĕшпе икĕ уйăхлăх курссем уçма хушас. Курсра вĕренме çынсене Хĕрлĕ Çарăн Политикăллă Главнăй Управленийĕн Кадрсен Главнăй Управленийĕпе пĕрле суйласа илмелле.
6. Командирсен (начальниксен) политика енĕпе ĕçлекен заместителĕсен, çак приказпа уйăрса лартнăскерсен, ĕç укçине малтанхи пекех хăварас.

ОБОРОНА ХАЛĂХ КОМИССАРĔ И. СТАЛИН.

Халăха йĕлтĕрпе çÿреме вĕрентесси

СССР Совнаркомĕ çумĕнчи физкультурăпа спортăн Пĕтĕм Союзри Комитечĕ вырăнти физкультура организацийĕсем умне 1942—1943 çулта хĕлле халăха вăрçă ĕçне тата йĕлтĕрпе çÿреме массăллăн вĕрентсе хатĕрлес задача лартрĕ. Ку ĕçе йĕлтĕрçĕсен отрячĕсенче, спорт обществин командисенче, предприятисемпе учрежденисенче, вĕренÿ заведенийĕсенче тата вăрçă ĕçне вĕренекен подразделенисенче туса ирттерме йышăннă.

Ялсемпе хуласем хушшинче çуран походсем, кроссем, командăсемпе куçса çÿремелли походсем тата вăрçă ĕçне вĕреннĕ чухне пулăшакан вăйăсем туса ирттермелле. Хĕл пуçламăшĕн малтанхи кунĕсенчех вуншар пин ĕççыннисем йĕлтĕрлĕ ăмăртусене, çĕрлехи тата кăнтăрлахи походсене хутшăнмалла.

Сăрт-туллă районсенчи çамрăксен сăрт çинче вăрçă вăрçмалли тата йĕлтĕрпе çÿремелли техникăна вĕренсе ситмелле. (ТАСС).

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 9-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Октябрĕн 9-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Моздок** районĕнче çапăçнă.

Ытти фронтсенче палăрнă улшăнусем пулман.

* * *

Октябрĕн 8-мĕшĕнче пирĕн авиаци фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 6 танкне тата войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 40 автомашинине пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 3 батарейине пусарса лартнă, противникăн пехотине виçĕ ротăна çити тата утлă çарăн пĕр взводне сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем противникăн атакисене сире-сире янă. Хулан пĕр хĕрринче гитлеровецсем пехотăн уйрăм ушкăнĕсемпе, вĕсене танксемпе пулăшса пырса, икĕ хутчен Атăл патне тухма хăтланнă. Пирĕн чаçсем противникăн атакисене сирсе янă, нимĕçсен пехотине пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă. Н-ски чаçăн боецĕсем темиçе кун хушши фашистсен унки ăшĕнче тăрса тăшманпа хаяррăн çапăçнă. Пирĕн боецсем противникăн унки ăшĕнчен татса тухнă та рабочи поселокăн районĕнче оборона участокне йышăннă. Гвардеец-минометчиксем пĕр кун хушшинче нимĕçсен 2 танкне персе çĕмĕрнĕ, 13 автомашинине вут тивретнĕ тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 800 çынна çити вĕлерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем хăйсем йышăнса тăракан рубежсене çирĕплетнĕ, уйрăм участоксенче вырăнти çапăçусем пынă. Н-ски чаçăн боецĕсем, противникăн атакине сирсе, тăшманăн салтакĕсемпе офицерĕсене 120 çынна вĕлернĕ, пĕр танк тата миномётсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă. Противникăн 6 дзотне тата 2 блиндажне çĕмĕрнĕ. Ытти участоксенче икĕ енĕ те пĕр-пĕрин çине тупăсемпе персе тăнă тата разведка отрячĕсем активлăн ĕçленĕ.

* * *

Моздок районĕнче противник пехотăн пĕр полка çити вăйĕсемпе, танксем пулăшса пынипе, пирĕн позицисене темиçе хутчен те атакăланă. Гитлеровецсен атакисене сирсе янă. Кункаçа боеприпассем тиенĕ 10 автомашинăна çĕмĕрсе тăкнă тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фрончĕн участокĕсенчен пĕринче нимĕçсен пехоти, 30 танк пулăшса пынипе, пирĕн позицисене атакăланă та халăх пурăнакан 2 пункта йышăнса илнĕ. Пуçланса кайнă хаяр çапăçусенче пирĕн чаçсем гитлеровецсене хирĕç контратака тунă. Нимĕçсен 10 танкне персе çĕмĕрнĕ тата противникăн пехотине пысăк çухатусем кÿнĕ.

* * *

Воронежран кăнтăралларахра венгерецсен пехотин пĕр роти Дон шывĕ урлă кунталла каçнă. Пирĕн подразделенисем минометсемпе тата пулеметсемпе персе 80 салтака пĕтерсе тăкнă. 10 мадьяра, вăл шутра пĕр офицера, тыткăна илнĕ.

* * *

Кабардинецсемпе балкар партизанĕсен нимĕçсен фашистла войскисен тылĕнче кĕрешекен отрячĕ румынсен дивизийĕн штабне хăюллăн тапăннă. Совет патриочĕсем румынсен салтакĕсемпе офицерĕсене 100 çынна çити вĕлернĕ, 2 автомашина тата 2 пулемет пĕтерсе тăкнă.

* * *

Венгерецсен 13-мĕш полкĕнчи 3-мĕш ротăран тыткăна лекнĕ салтак Бела Кантор çапла каласа панă: «Германи салтакĕсемпе Венгри салтакĕсем вырăссен мирлĕ халăхне асап кăтартнине, вăрă-хурахла çаратнине эпĕ хам куçпах нумай курнă. Кески ялĕнче Венгри салтакĕсем пÿртрен-пÿрте çÿресе, складовойсенче тата арчасенче ухтарманни хăвармарĕç, вĕсем мĕн алла лекнĕ çавна йăлтах çаратса илсе тухрĕç: кĕрĕксене, хĕрарăмсен çиелтен тăхăнмалли кĕписене, кĕпе-йĕмсене, атă-пушмаксене, чассисене, алшишсене илмесĕр хăвармарĕç. 3-мĕш взводри Антал Туран, Имрэ Гергель тата Дюла Кович çаратнă пурлăха тем пысăкĕш тюксем туса çыхрĕç. Венгри офицерĕсем те салтаксенчен юлмарĕç. Лейтенант Золтан Тамаш тата старши лейтенант Ферен Туроци пуринчен те ытларах çаратса тултарчĕç. Офицерсем те, салтаксем те вырăс хĕрарăмĕсемпе хĕрĕсене ирĕксĕрлесе пусмăрлатчĕç тата вĕлеретчĕç».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем хăйсем оккупациленĕ районсенче советсен мирлĕ халăхне пинĕ-пинĕпе пере-пере пăрахнă, тăлăха юлнă пĕчĕк ачасене выçă вилĕмпе вилмелле туса хунă. Фашистсен Минск хулинче тухса тăракан хаçачĕ «Минскер цейтунг» беспризорниксем çинчен çапла çырать: «Кирек мĕнле çанталăк пулсан та вĕсем уçă пĕлĕт айĕнчех пурăнаççĕ, ыйткаланипе тăранса пурăнаççĕ. Вокзала çитсе чарăнакан кашни поезда беспризорниксем сырăнса илеççĕ. Вĕсенчен пурте 5 çултан пуçласа 12 çула çитиччинехи ачасем». Нимĕç бандичĕсем белоруссен ачисенчен вĕсен ашшĕсене туртса илнĕ, вĕсене пĕр хÿтлĕхсĕр, çимелли çăкăрсăр хăварнă, халĕ тата çĕнĕрен темĕн те пĕр усал ĕçсем тăваççĕ. Сентябрĕн 27-мĕшĕнче эсэсовецсем Минск хулинче беспризорниксене хупăрласа илнĕ. Вокзал çывăхĕнче тата ишĕлсе аннă çурт-йĕр хушшинче вĕсем 100 беспризорнике яхăн çулса тытнă та çав ачасене пурне те персе пăрахнă.

Октябрĕн 10-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Октябрĕн 10-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Моздок** районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем хăйсем йышăнса тăракан позицисене хÿтĕлесе тăнă, противникăн пехотин пĕчĕк групписем тунă атакăсене сире-сире янă. Н-ски чаçăн участокĕсенче нимĕçсен пехоти пĕр ротăна çити вăйпа пирĕн тĕреклетнĕ пункт патне пыма хăтланнă. Пирĕн подразделенисем пулеметсемпе тата минометсемпе персе гитлеровецсене сапаласа янă, гитлеровецсем вара хăйсен малтанхи позицийĕсем çине чакнă. Ытти участоксенче икĕ енĕ те пĕр-пĕрин çине артиллерипе тата минометсемпе персе тăнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн пĕр чаçăн боецĕсем нимĕçсен пехотин пилĕк контратакине сирсе янă. Çав çапăçура 200 гитлеровеца çити вĕлернĕ, 5 пулемет тата 3 миномет пĕтерсе тăкнă. Тепĕр участокра пирĕн разведка тăвакан отряд çĕрле нимĕçсем тăракан вырăна кĕрсе кайнă. Кĕске вăхăт хушши пулса иртнĕ тытăçура пирĕн боецсем тăшманăн 70 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă. Противникăн боеприпассем хунă складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн чаçсем противникăн атакисене сире-сире янă. Пĕр участокра гитлеровецсем танксем пулăшса пынипе виçĕ хутчен пирĕн оборонăна татма хăтланнă. Противникăн атакисене сирсе янă. Пирĕн боецсем 2 танк, 7 автомашина тата нимĕçсен пехотине пĕр ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре гитлеровецсем виçĕ кун ĕнтĕ халăх пурăнакан пĕр пункта атакăлаççĕ. Çав участокра кĕрешекен пирĕн часть, Рыжов юлташ ертсе пыраканскер, нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. Пехотăпа танксен çĕнĕ вăйĕсене илсе пырса, противник халăх пурăнакан çав пунктăн хĕррине кĕрсе кайнă. Пирĕн боецсем вăйлăн çапăçаççĕ, çав кĕрсе кайнă гитлеровецсене пĕтерсе пыраççĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн снайперсемпе разведчиксем активлăн кĕрешнипе тата артиллерипе минометсем персе тăнипе тăшманăн 200 салтакĕпе офицерне çити вĕлерсе тăкнă, 18 дзотпа 12 блиндажа çĕмĕрнĕ, 4 оруди тата противникăн миномечĕсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă.

Пирĕн зенитнăй артиллери Ленинград патне пымалли вырăнсенче нимĕçсен «Юнкерс-87» йышши 6 бомбардировщикне персе ÿкернĕ

* * *

Сталинград районĕнче совет летчикĕ нимĕçсен «Хейнкель-11» йышши бомбардировщикне персе ÿкернĕ. Унăн экипажне тыткăна илнĕ. Çав самолетăн летчик-наблюдателĕ Вилли Майстер çапла каласа панă: «Икĕ эрне хушшинче пирĕн отрядра 9 самолетран 5 самолет пĕтрĕç. Персе ÿкернĕ самолетсен экипажĕсем е вилнĕ, е тыткăна лекнĕ. Ытти отрядсем те пысăк çухатусем тÿснĕ. Нимĕç командованийĕ Сталинград патне войскăсем тата танксемпе самолетсем питĕ нумай илсе пырса тăратнă. Пире çапла калатчĕç: хулана тăватă кун хушшинче илетпĕр, тетчĕç, анчах та юн нумай тăктаракан çапăçусем икĕ уйăх пыраççĕ ĕнтĕ. Вырăссем çавăн пек вăйлăн хирĕç тăрасса никам та кĕтмен. Офицерсем нимĕç войскисен ĕçĕсем ăнманнине çутçанталăк условийĕсем начаррипе ăнлантарса пама хăтлаççĕ. Çывăхарса килекен хĕл салтаксене кăна мар, офицерсене те хăратать. Нумайĕшĕ нимĕç çарĕ вырăссен иккĕмĕш хĕлне чăтса ирттереймĕ тесе шутлаççĕ, вĕсем вăрçă мĕнпе пĕтессине хăраса кĕтсе тăраççĕ».

* * *

Нимĕçсен 97-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 204-мĕш полкăн 11-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Фридрих Зуппан çапла каласа панă: «Çынсем хушса панă хыççăн пирĕн ротăра сентябрь уйăхĕн вĕçĕнче 140 çын шутланнă. Малтанхи çапăçусенчех пирĕн 116 çын вилчĕ е аманчĕ. Ротăн командирĕ Лахимеер лейтенант, взводсен командирĕсем Киллингер фельдфебель, Краммингер обер-фельдфебель тата Райлих унтер-офицер стройран тухрĕç. Пире пуринчен ытла вырăссен миномечĕсем пысăк çухатусем тÿстерчĕç».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Ростов облаçĕнчи Александровка ялĕнчи мĕнпур çынсене çаратса тухнă та, унтан çуртсене вут тĕртсе çунтарнă. Пушарта колхозниксен 94 килĕ тата хуçалăх хуралчĕсем пурте çунса кайнă. Гитлеровецсем çав ялта 60 хресчене асаплантарса, персе вĕлернĕ. Колхознике Иван Матвеевич Дудина, унăн арăмне Прасковья Ивановăна, ывăлне Владимира, хĕрне Татьянăна тата ывăлĕн ывăлне Юрăна фашистла ирсĕрсем нÿхрепе хăваласа кĕртнĕ те унта гранатăсем ывăтнă.

* * *

Польша патриочĕсем Радома районĕнчи пĕр чугунçул станцийĕнче горючи тултарнă поезда, Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта каяканскере, çунтарса янă.

Тата тепĕр гитлерла элек

Çак кунсенче нимĕçсен командованийĕ çапла пĕлтернĕ: Ладога кÿллинчен кăнтăрарахра нимĕçсен войскисем советсен 7 дивизине çавăрса илсе пĕтерсе тăкнă иккен, 12.370 çын тыткăна илнĕ, 244 танк, 307 оруди, 491 миномет т. ыт. те тытса илнĕ е пĕтерсе тăкнă имĕш. Нимĕçсен командованийĕн çак пĕлтерĕвĕ малтан пуçласа вĕçне çитиччен ним намăса пĕлмесĕр суйни пулса тăрать. Ладога кÿллинчен кăнтăрарахра та, ăçта та пулин урăх вырăнта та гитлеровецсем советсен пĕр дивизине мар, пĕр полкне те çавăрса илни пулман.

Ладога кÿллинчен кăнтăрарахра, Синявино районĕнче, сентябрь уйăхĕнче совет войскисем наступленилле çапăçусем пуçласа ячĕç. Çав операцин тĕллевĕ—нимĕç çарĕн вăйĕсен пĕр пайне фронтăн кăнтăрти участокĕнчен илсе урăх вырăналла куçартарасси пулнă. Çав тĕллев пурнăçа кĕнĕ те. Нимĕçсен темиçе дивизине, вăл шутра Крымра тăракан тăватă пехотнăй дивизие: 24-мĕш, 28-мĕш, 132-мĕш тата 170-мĕш дивизисене, Сталинград патĕнче тата Терек çинче кĕрешме палăртнăскерсене, васкасах Синявино районне илсе килнĕ, кунта вăл дивизисене совет войскисем çĕмĕрсе тăкнă е лайăхах лÿчĕркесе тăкнă. Çакăнти çапăçусенче нимĕçсен 223-мĕшпе 227-мĕш пехотнăй дивизийĕсене аркатса тăкнă, 5-мĕш горно-стрелковăй, 24-мĕш, 28-мĕш, 121-мĕш, 132-мĕш, 170-мĕш пехотнăй дивизисене пысăк çухатусем кÿнĕ. Противник, вилнисене, аманнисене тата тыткăна лекнисене шутласан, 60 пинрен кая мар салтакпа офицер çухатнă. Çав вăхăт хушшинчех нимĕçсенне 200 танка çити, 244 оруди, 400 миномет таран, 730 пулемет çĕмĕрнĕ е аркатса тăкнă тата 260 самолет персе ÿкернĕ.

Пирĕн войскăсем çав çапăçусенче, вилнисене, аманнисене тата пĕр хыпарсăр çухалнисене шутласан, 21.384 çын çухатнă. Çавăнта пулса иртнĕ çапăçусенче пирĕн чаçсем 58 танк, 93 оруди, 249 пулемет, 77 станковăй тата 214 ручной пулемет çухатнă.

Синявино районĕнче пулнă çапăçусенче противникăн оборонине татса кĕрсе вĕсен тĕреклетнĕ пункчĕсене чылай тытса илнĕ, вĕсене халĕ, противникăн мĕнпур контратакисене пăхмасăр, пирĕн войскăсем хăйсен аллинче çирĕппĕн тытса тăраççĕ.

Çакăн пек ĕнтĕ чăн-чăн фактсем, вĕсем гитлерла фальшивомонетчиксен çĕнĕ элекне пĕтĕмĕшпех пăрахăçа кăлараççĕ.

СОВИНФОРМБЮРО.

Елчĕк МТС-ĕнчи трактористсен патриотла пуçарăвĕ

Елчĕк машинно-тракторнăй станцинчи трактористсемпе комбайнерсем кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсенче пысăк çитĕнÿсем турĕç. Хăйсен пĕтĕм вăйĕпе пултарулăхне вĕсем ялхуçалăхĕнчи ĕçсене ăнăçлăн туса ирттерсе çĕршывпа фронта ытларах тырă, техникăллă культура туса парас ĕçе хучĕç. Октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне машинно-тракторнăй станци хăйĕн çулталăкри ĕç планне (авăн çапассине те шута илсе) 104 процент пурнăçларĕ. Авăн çапас плана паянхи куна 89 процент пурнăçланă, кăçал 7.363 килограмм горючи перекетлесе хăварнă.

Тракторпа тумалли ĕçсен çулталăкри планне 9 бригада ирттерсе пурнăçланă. А. Веков юлташ бригадир пулса ертсе пыракан 13-мĕш номерлĕ трактор бригади çулталăкри ĕçсен планне 168 процент тултарса МТС бригадисем хушшинче пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Бригада кăçал 1.283 килограмм горючи перекетленĕ. Иккĕмĕш вырăна А. Мякинин юлташ ертсе пыракан бригада йышăнчĕ, вăл çулталăкри ĕçсен планне 129 процент пурнăçланă. П. Марков юлташăн бригади кăçал горючине перекетлес тĕлĕшпе пуринчен те паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлерĕ. Бригада çулталăк хушшинче тумалли ĕç планне 126 процент тултарчĕ, 3.638 килограмм горючи перекетлесе хăварчĕ.

МТС трактористĕсемпе трактористкисем, комбайнерĕсемпе комбайнеркисем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва активлăн хутшăнчĕç. Халĕ авăн çапнă çĕрте те, кĕрхи çĕртме тунă çĕрте те тата тракторсене ремонтланă çĕрте те хĕрÿллĕ ĕç пырать. Трактористсемпе комбайнерсем пĕр шухăшпа, пĕр туйăмпа — фронта лайăхрах та пысăкрах пулăшу парас кăмăлпа хĕрÿллĕн ĕçлеççĕ. Çулталăкри ĕç планне ирттерсе пурнăçлани вăл — питĕ лайăх, анчах нимĕç оккупанчĕсене пĕтерсе тăкма фронтри юлташсене татах та витĕмлĕрех, пысăкрах пулăшу парас килет. Çак шухăшпа трактористсемпе трактористкăсем, комбайнерсем, МТС-ĕн пĕтĕм коллективĕ сентябрĕн 28-мĕшĕнче парти организацин уçă пухăвне пухăнчĕ. Тракторист-комбайнер А. Тамуков юлташ МТС-ри пур трактористсен шухăшне каласа пачĕ:

— Фронта ĕçпе те, ăшă тумтирсемпе те, укçа-тенкĕпе те пулăшса тăрасси — пирĕн задача. Анчах ку сахал. Эпир, трактористсем, фронтри боецсемпе юнашар тăратпăр, вĕсемпе пĕр ĕçех тăватпăр. Айтăр хамăр ятпа Хĕрлĕ Çара танксен колоннине туса парар. Пирĕн пуçарăва республикăри пур МТС-сенче те анлăн сарма ыйтар.

Унăн сĕнĕвне пуху ырласа йышăнчĕ. Чăваш республикинчи трактористсемпе трактористкăсене, комбайнерсемпе комбайнеркăсене «Тракторист Чувашии» ятлă танксен колоннине тума укçа пухма чĕнсе çыру çырчĕ.

Елчĕк МТС-ĕнчи трактористсем «Тракторист Чувашии» ятлă танксен колоннине тума паянхи куна пурĕ 51 пин тенкĕ укçа пухса панă. Пухура вĕсем 40 пин тенкĕ пухса пама пулнăччĕ. Тракторист А. Тамуков танксен колоннине тума 1000 тенкĕ укçа пачĕ. Ытти трактористсем те чарăнса тămарĕç. Спиридонов юлташăн бригади пурĕ 6000 тенкĕ, П. Марков, И. Демяшкин юлташсен бригадисем 5-шер пин тенкĕ укçа пачĕç. Трактор бригадин бригадирĕ П. Гладков юлташ «Тракторист Чувашии» ятлă танксен колоннине тума 1.100 тенкĕ укçа пачĕ.

Пирĕн пуçарăва республикăри пур трактористсем те хапăл туса йышăнасса эпир шанса тăратпăр.

Г. КУДРЯВЦЕВ,
МТС политотделĕн начальник заместителĕ.

ПАРНЕСЕНЕ ФРОНТА ĂСАТРĔÇ

КУСЛАВККА, октябрĕн 9-мĕшĕ. **(Телефонпа).** Паян Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли уяв ячĕпе парнесем хатĕрлес тĕлĕшпе ĕçлекен комисси фронта иккĕмĕш хут парнесем ăсатрĕ.

Районри ĕççыннисем паттăр воинсем валли 50 килограмм сарçу, 50 килограмм пыл, 200 килограмм какай, 30 килограмм махорка, 500 çăмарта, 780 килограмм шурă çăнăх, пĕр тонна çĕрулми, 350 килограмм купăста, 100 килограмм кишĕр, 35 килограмм сухан, 160 килограмм тăварланă хăяр, 300 пачка табак, 2.240 тенкĕ укçа ярса пачĕç.

Парнесем хатĕрлес ĕç халĕ те хĕрÿллĕн пырать.

И. ШАРКОВ.

—о—

Брынза парса татрĕç

ПЕРВОМАЙСКОЕ. Пăлапуç Нурăс ялсоветне кĕрекен Киров ячĕпе тăракан колхозăн кăçал государствăна 66 килограмм брынза (чăкăт) памалла пулнă. Халĕ колхоз, государствăна ытти парăмсене парса татнипе пĕрлех, брынза парас обязательствăна та 100 процентчĕпех пурнăçларĕ.

И. МИТРОФАНОВ.

ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂ ФРОНЧĔСЕНЧЕ

МОЗДОК РАЙОНĔНЧЕ

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрĕн 9-мĕшĕ. (**ТАСС спецкорĕ**). Пĕр участокра фашистсен 2 батальонĕ, 20 танк хӳтĕлесе пынипе, пирĕн подразделенине кункаçа 7 хутчен атакăланă. Тăшманăн атакисем пĕри те ăнăçлă пулман. Нимĕçсем хĕснине сирсе ярса, вĕсен вăйĕсене хавшатса çитерсе, совет боецĕсем хăйсем тăшман çине контратака туса кĕрсе кайнă та хăйсен позицине кăштах лайăхлатнă. Фашистсем чĕрĕ вăй тĕлĕшпе те, техника енчен те пысăк çухатусем тӳснĕ.

Тепĕр участокра Н-ски соединенийĕн артиллерисчĕсем нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1000 çынна ытла вĕлерсе тăкнă, темиçе вунă танк, 21 пулемет, 10 оруди, 13 миномет, 6 автомашина тата боеприпассем тиенĕ 6 лав пĕтерсе тăкнă.

Н-ски авиачаçĕнчи летчиксем тăшман аэродромĕ çине вĕçсе кайса ăнăçуллăн тапăннă. Картласа тăракан вут-çулăм витĕр тухса, вĕсем аэродром çинче тăшманăнне 10 самолет ытла пĕтерсе тăкнă. Икĕ «Мессершмитт» сывлăша çĕкленме хăтланнă, анчах та пирĕн самолетсем вĕсене çавăнтах персе ӳкернĕ. Бомбардировщиксене хӳтĕлесе пыракан пирĕн истребительсем сывлăшра 20 «Мессершмиттпа» тĕл пулнă. Совет летчикĕсем çавсемпе çапăçма кĕрсе кайса тăшманăн 11 самолетне персе ӳкернĕ

Г. ОШАРОВСКИЙ.

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрĕн 9-мĕшĕ. (**ТАСС спецкорĕ**). Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехри уйрăм участоксенче пирĕн чаçсем противникпа хаяррăн çапăçаççĕ. Иртнĕ талăк хушшинче совет боецĕсем, фашистсен контратакисене сире-сире ярса, малалла куçнă.

Юлашки кунсенче авиаци чылаях активланчĕ. Сывлăшри çапăçусенче пирĕн летчиксем нимĕçсен 13 самолетне персе ӳкернĕ.

Юлашки çапăçусенче пирĕн чаçсем Новороссийскран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре çав участока нумаях пулмасть çитсе кĕнĕ румынсен пехотнăй дивизине чылай пысăк çухатусем кӳнĕ. Тăшман дивизийĕнче салтаксемпе офицерсем нумай вилсе пĕтнĕ е аманнă. Совет боецĕсем 36 оруди, 24 миномет, 29 станковăй тата 34 ручной пулемет, автоматсем, винтовкăсем, снарядсем, минăсем, ручной гранатăсем нумай тата тумтирсемпе продовольстви обозне тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур.

Пехотинецсемпе артиллеристсем тата летчиксем 16 оруди, 9 миномет, 7 автомашинăна тата çар грузĕсем турттарса пыракан лавсене нумай пĕтерсе тăкнă. Çав çапăçусенче артиллерин 3 батарейине тата минометсен 2 батарейине пусарса лартнă.

УКРАИНĂН МУЗЫКĂПА ДРАМА ТЕАТРĔ ÇĔМĔРЛЕРЕ

ÇĔМĔРЛЕ. (**Хамăр корр.**). Иккĕмĕш эрне ĕнтĕ комбинат клубĕнче Украинăн музыкăпа драма театрĕн коллективĕ постановкăсем парать. Ку таринччен вăл «Наталка-Полтавка», «Ой не ходи Грицю да и на вечерницю» пьесăсене тата темиçе концерт лартса пачĕ. Вĕсем пурте пысăк ăнăçлăхпа иртрĕç, залра яланах тулли халăх пулать.

Государствăна тырă парас ĕçе большевикла ертсе пымалла

КАНАШ, октябрĕн 8-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**). Государствăна обязательнăй йĕркепе тырă памалли плана районри колхозсем октябрĕн 6-мĕшĕ тĕлне 76,7 процент тултарнă, МТС ĕçĕшĕн тухакан натуроплатăна 50,7 процент тӳлесе татнă, Хĕрлĕ Çарăн тырă фондне тырă хывмалли плана 38,7 процент тултарнă.

Малта пыракан колхозсем, вĕсен руководителĕсем тырă парас ĕçе вăрçă вăхăтĕнчи ответлăхпа туса пынипе, государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тата ирттерсе пурнăçласа пыраççĕ. Районри Шмидт ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ В. Баранов юлташ) государство умĕнчи хăйĕн обязательствисене пур енĕпе те ирттерсе пурнăçланă. Обязательнăй йĕркепе тырă памалли плана октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмĕшпех тултарнă, Хĕрлĕ Çарăн тырă фондне планпа 208 центнер тырă памалла пулсан, колхоз 221,2 центнер панă. Çавăн пекех Çĕнĕ Шелттемри «Хĕрлĕ Çăлтăр» колхоз та (председателĕ коммунист Викторов юлташ) государство умĕнчи обязательствăсене ирттерсе пурнăçланă, натуроплата шучĕпе 100 центнер вырăнне 121 центнер тырă панă. Доронин ячĕпе тăракан, «Новая жизнь», «Комсомолец», «Акатуй», «Красная пламя» колхозсен руководителĕсем те государствăна тырă парас ĕçре ответлăха çирĕп туйса ĕçлеççĕ. Ку колхозсем государство умĕнчи пур обязательствăсене те çак çывăх кунсенчех татса параççĕ.

Анчах та районри чылай колхозсенче государствăна тырă, пахча-çимĕçсем парас ĕç вăраха тăсăлса пырать. Колхоз председателĕсем, райçĕрĕç работникĕсем тата ВКП(б) райкомĕ те ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлес, вĕсене государствăн хатĕрлев пункчĕсене леçес ĕçе вăлатас тĕлĕшпе ĕçре нимĕнле улшăнусем те туман-ха. Уйрăм колхозсенче тырă леçес ĕçре мĕнле çитменлĕхсем пулнă, çав çитменлĕхсене паян кун та пĕтермен. Тĕслĕхрен, Аксаринори Крупская ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Мартынов юлташ) уборка ĕçĕсене тахçан вĕçленĕ. Анчах та государствăна тырă памалли плана пурĕ те 62,5 процент чухлĕ çеç тултарнă. Колхоз сентябрĕн 25-мĕшĕпе октябрĕн 1-мĕшĕ хушшинче государствăна тырă пĕр пĕрчĕ те паман. Октябрĕн 1-мĕшĕпе 5-мĕшĕ хушшинче те 2 центнер çеç леçсе панă. Колхозăн государство умĕнче парăмлă пулса тăма нимĕнле сăлтав та çук. Колхоз председателĕн наянлăхне пула çеç государствăна тырă леçсе парас ĕç кунта вăраха тăсăлса пырать.

Канаш районĕнчи коммунистсемпе партире тăман большевиксем район государствăна тырă парас тĕлĕшпе кăçал юлса пынинчен хăйсемшĕн халех тивĕçлĕ вывод тумалла. Государство валли, хамăрăн тăван Хĕрлĕ Çар валли ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесе парас ĕçе районри колхозсенче халех вăйлатмалла.

Государствăна тырă парас тĕлĕшпе район иртнĕ пилĕккунлăхра чăтма çук япăх ĕçлерĕ. Октябрĕн 1-мĕшпе 5-мĕш кунĕсем хушшинче район обязательствăсем шучĕпе государствăна тырă парас ĕçре 0,7 процент чухлĕ çеç ӳсĕм тунă, натуроплата тӳлесси енĕпе те, Хĕрлĕ Çарăн тырă фондне тăвас тĕлĕшпе те ӳсĕмсем пĕчĕккĕ. Çакă ĕнтĕ нумай колхозсенче государствăна тырă леçес ĕç вăйланса пынине мар, чакса пынине кăтартать. «Красный путиловец», «Красная Чувашия», «Чăваш ЦИК-ĕ» колхозсем октябрĕн 1—5-мĕш кунĕсенче государствăна тырă пачах паман.

Государствăна çĕрулми памалли обязательствăна пурнăçлас тĕлĕшпе районри ĕçсем лайăххах пулса пыраççĕ. Çĕрулми памалли плана район паянхи куна 126 процент тултарнă. Çав вăхăтрах çĕрулми обязательствисене парса татман колхозсем те пур. Государствăна çĕрулми парас обязательствăна пĕр тăхтамасăр пур колхозсен те пурнăçламалла. Çавăн пекех государствăна пахча-çимĕç парас ĕçе те районри чылай колхозсен вăйлатмалла. Октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне районĕпе купăста памалли плана 60%, сухан памалли плана — 82,7 процент, кишĕр — 60,6 процент, кăшман — 38,6 процент çеç тултарнă. Пахча-çимĕçсене хатĕрлев пункчĕсене халь леçсе памалла, ку ĕçе кая хăварма юрамасть. Анчах та чылай колхозсенче государство умĕнчи обязательствăсене хăвăртрах парса татас тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлени паян кун та курăнмасть-ха. Государство умĕнчи обязательствăсене хăвăртрах пурнăçлас тĕлĕшпе ВКП(б) Чăваш Обкомĕн бюровĕ октябрĕн 8-мĕшĕнчен пуçласа колхозсенче хĕрлĕ обозсем организацилеме хушса хăварнă. Районри çĕрĕç органĕнчи работниксен ку пуçарăва халех кашни колхоза çитермелле, государствăна тырă парас ĕçе халех хăвăртлатмалла.

П. НИКОЛАЕВ.

Молотилкăсем начар ĕçлеççĕ

КАЛИНИНО, октябрĕн 10-мĕшĕ. (**Телефон тăрăх**). Районра авăн çапас ĕç кая юлса пырать. Паянхи кун тĕлне районĕпе авăн çапас плана 62 процент кăна тултарнă.

Нумай колхозсенче авăн çапас ĕçе япăх организациленĕ. Вăрнар машинно-тракторнăй станцин молотилкисем вунпĕртен уллă çеç ĕçлеççĕ. Вĕсем те хăйсен нормисене тултараймаççĕ. Большаков юлташ ертсе пыракан тракторсен бригадинчи «МК—1100» молотилкăпа туллин усă курмаççĕ. Çак молотилкăпа 22 кун хушшинче те «Çĕнъял» колхозра 90 тонна кăна тырă çапнă.

Авăн çапас ĕçе колхоз председателĕсем тивĕçлипе ертсе пымаççĕ. Мăнъялти «Трактор» колхозра (председателĕ Васильев) ку тарана çитсе те 25 гектар, «Победа» колхозра 80 гектар, «Радио» колхозра 45 гектар çинчи тырăсене çеç çапнă. Паянхи кун тĕлне 58 колхозран 9 колхоз çеç авăн çапас ĕçсене вĕçленĕ.

Районра кĕрхи çĕртме тăвасси те вăраха кайса пырать. Планпа 7.400 гектар кĕрхи çĕртме тăвас вырăнне 3.258 гектар кăна тунă. Нумай колхозсем кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе лашасен 20—25 процентне çеç явăçтарнă. «КИМ», «Путь Ленина», «Радио» тата ытти колхозсенче кĕрхи çĕртме тăвассине 10—20 процент пурнăçланипех лăпланса ларнă. Чылай колхозсенче кĕрхи çĕртме пахалăхĕ начар, 14—15 сантиметр тарăнăш çеç сухалаççĕ.

М. ЛОГИНОВ,
Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ.

Ют çĕршывсенче

Чунцинри пресс-конференцире Уилки тухса калани

ЧУНЦИН, октябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Китайăн тата ютçĕршыв корреспонденчĕсен пресс-конференцинче тухса каласа, Уилки çапла пĕлтернĕ:

«Эпĕ тĕнчери 13 çĕршывра пултăм. Эпĕ государство тытăмĕн тĕрлĕ системисене куртăм, вара çакна палăртрăм: эпĕ калаçнă рядовой çынсен пурин те пĕр пек тăватă кăмăл пур. Пĕрремĕшĕнчен, вĕсем союзлă çĕршывсем çĕнтерессишĕн тăраççĕ, иккĕмĕшĕнчен, вĕсем союзлă çĕршывсене шăпах халĕ наступлени пуçлаттарасшăн, виççĕмĕшĕнчен, вĕсем çак вăрçă пĕтнĕ хыççăн ирĕклĕ те никама пăхăнмасăр пурăнма май илесшĕн. Тăваттăмĕшĕнчен, вĕсем пурте халĕ вăрçакан демократиллĕ çĕршывсем вăрçă хыççăн ытти çĕршывсене ирĕклĕх парасси пирки хăшпĕр таран иккĕленеççĕ. Хальхи вăхăтра çак рядовой çынсем чăннипех пулăшмасан, вăрçăра çĕнтерме питех те йывăр, мир тума вара унсăр пачах та май çук. Пирĕн пĕтĕм тĕнчери халăхăн виççĕмĕш пайĕн наступлениллĕ кăмăлне хамăр енне çавăрмалла. Халиччен эпир çакна тăвайман-ха, çакна эпир халĕ те тăваймастпăр. Пирĕн çакна тумалла».

Малалла Уилки оборона туса вăрçăра çĕнтерме çуккине палăртнă. «Пирĕн çакна яланах асра тытас пулать, тесе шутлатăп эпĕ. Оборона туса вăрçăра та, политикăра та çĕнтерме çук. Ман шухăшпа, халĕ мĕнпур союзлă çĕршывсемшĕн хĕçпăшалпа генеральнăй наступлени тумалли вăхăт çитрĕ. Эпĕ хам куçпа курнисене ĕненме пултаратăп пулсан, эпир вăйлăн пырса çапма хатĕрленсе çитнĕ».

«Эпир, Пĕрлешӳллĕ Штатсем, — тенĕ малалла Уилки,—хамăрăн çар хатĕрĕсем тăвакан производство çинчен нумай калаçатпăр, анчах та пирĕн союзниксенчен хăшпĕрисем пирĕн хĕçпăшала сахал кураççĕ. Паллах ĕнтĕ, пирĕн мухтаса пĕтернĕ хĕçпăшалсем ăçта кайни вĕсене интереслентерет. Паллах ĕнтĕ, хăшпĕрисем пирĕн хĕçпăшала çакăн пек пĕчĕк порцисемпе нумай вăхăт хушши илсе тăрăпăр-и тесе иккĕленсе шухăшлаççĕ».

«Çак вăрçă,—тенĕ Уилки,—пĕр нацисем теприсене пăхăнтарса тăрассине пĕтермелле, тесе шутлатпăр эпир. Çапла, сăмахран, паянран пуçласа Китая китаецсем кăна тытса тăмалла. Çакна вара пирĕн халĕ калас пулать, вăрçă хыççăн мар. Тĕнчен çакăн пек система шухăшласа хатĕрлемелле: колониллĕ çĕршывсен халăхĕсем союзлă нацисен ĕçне хутшăнса ирĕклĕ тата никама пăхăнман халăхсем пулма пултарччăр. Пирĕн программа туса хатĕрлемелле, çав программа тăрăх колониллĕ халăхсем хăйсемшĕн ĕçлеме тата хăйсен правительствине суйлама майсем илме пултарччăр. Вăрçă хыççăн мĕнпур халăхсен пурнăç шайне çĕклемелле тата çирĕп мир туса хумалла, ун чухне пур çынсем те ирĕклĕ пурăнма пултарччăр».

Юлашкинчен Уилки çак шухăшсем унăн хăйĕн личнăй шухăшĕсем пулнине асăрхаттарнă.

Норвегире гитлерла юнлă террор иртĕхет

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 8-мĕш. (ТАСС). Швецири телеграф агентстви пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсем Тронхеймра унти чи паллă 10 гражданина персе пăрахнă. Çав 10 çын хушшинче Норвегин чи паллă министрĕсенчен пĕри, парламент депутачĕ Окран пулнă. «Стокгольм тидниинген» ятлă хаçат çырнă тăрăх, Тронхеймра тата Тренделаг провинцийĕнче 700 çынна яхăн арестленĕ. Чи йышлă арестсем Эрландет тата Стринда местечкисенче пулнă. Унта юлашки вăхăтра чылаях вăйлă хумханусем пулса иртнĕ.

ЛОНДОН, октябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС), Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер ирхине Тронхейм хулинче туса хунă чрезвычайнăй положени Рерус хулине те пырса тивет.

ЖЕНЕВА, октябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Ослори радио çапла пĕлтернĕ: ĕнер Тронхеймра чрезвычайнăй положени вăхăтĕнчи суд приговорĕпе 15 çынна персе пăрахнă.

Квислинга хирĕç оппозицире тăраççĕ тесе 100 норвежеца 3,5 миллион крон штраф тӳлеттермелле приговор йышăннă.

СТОКГОЛЬМ, октябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Шведсен «Дагенс нюхетер» ятлă хаçачĕ пĕлтернĕ тăрăх, çак юлашки кунсенче Тронхеймра рабочисене питĕ нумай арестленĕ. Вĕсене трибунал судне параççĕ пулĕ тесе хăраççĕ. Тронхеймри полици чиновникĕсем çапла каланă: октябрĕн 6-мĕшĕнче персе пăрахнă инженер Экорнес тата архитектор Эггин нимĕçсен Тронхейм хулинчен çурçĕреллерех пулнă строительствинче ĕçленĕ. Çав строительствăна икĕ уйăх маларах сирпĕнтерсе янă.

«Свенска дагбладет» ятлă хаçат çакна кăтартса çырать: юлашки вăхăтра çынсене пере-пере вĕлерни Тронхеймри халăхăн тарăхăвне татах та ытларах вăйлатса ячĕ, халăх персе пăрахмалли çынсен списокне тума пулăшнă квислинговецсене те питех те курайми пулса кайнă.

Норвегире лару-тăру çивĕчленсе кайнă

ЛОНДОН, октябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Тронхеймра юлашки кун хушшинче 25 норвежеца асаплантарса вĕлернĕ. Квислинговецсенчен тăракан специальнăй судсем тунă. Германие хирĕçле шухăш-кăмăллă тесе шухăшлакан норвежецсене çав судсем нимĕçсен аллине тытса памалла туса приговорсем йышăнаççĕ.

Оккупациллĕ влаçсемпе квислинговецсен чиновникĕсем юлашки вăхăтра Норвегире продовольствие массăллăн турта-турта илеççĕ.

Виши правительстви умне Германи çĕнĕ требованисем лартнă

ЛОНДОН, октябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). «Ньюс кроникл» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Лаваль Берлинран 150 пин французжелезнодорожника Германие яма хушакан требовани илнĕ. Çав требование пурнăçа кĕртни Германие хăйĕн железнодорожникĕсене çара илме май панă пулĕччĕ. Францири чугунçулсен администрацийĕ нимĕçсен требованине те, Лавалĕн инструкцине те пурнăçа кĕртме килĕшмест.

Иран меджлисĕн председательне суйлани

ТЕГЕРАН, октябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 6-мĕшĕнче меджлис президиумне суйланă. Ăна кашни 6 уйăхран суйласа пыраççĕ. Президиум председателĕ пулма каллех Эсфендиарие суйланă.

Америкăри государственнăй департамент пĕлтерни

ВАШИНГТОН, октябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государственнăй секретарĕ çапла пĕлтернĕ: «октябрĕн 6-мĕшĕнче Государственнăй секретарĕн заместителĕ Уэллен, Совет Союзĕн посолĕ Литвинов тата Англи посланникĕ Кэмпбалл Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе Англи Совет Союзне çар хатĕрĕсем, боеприпассем тата чĕртавар тăратасси çинчен калакан протокола алă пуснă. Çав протокол темиçе уйăх каялла вăя кĕнĕ килĕшӳсене официальнăй йĕркепе пĕтĕçтерсе йĕркене кĕртни пулса тăрать, çав килĕшӳсем Совет Союзне çар хатĕрĕсем парса тăмалли программăна, союзниксен представителĕсен Мускаври конференцийĕ çырса хатĕрленĕскере, пĕр чарăнмасăр пурнăçа кĕртсе пымалли çинчен калаççĕ».

Уилки Китайран тухса кайни

ЧУНЦИН, октябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Китайра пĕр эрне пурăннă хыççăн, Уилки Чунцинран самолет çине ларса вĕçсе кайнă.

Папена „тапăнни“ çинчен пуçласа янă ĕçе тепĕр хут пăхса тухмалла тунă

АНКАРА, октябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). «Улус» хаçат паян çакăн пек пĕлтерӳ пичетлесе кăларнă: «Кассаци сучĕн пĕрремĕш секцийĕ Папена тапăннă ĕç пирки судпа айăпланă çынсен жалобисене вĕренет. Кассаци сучĕн главнăй прокурорĕ çак ĕçе вĕренсе пĕтернĕ. Хăйĕн заключенийĕнче прокурор Анкарари уголовнăй судăн çак ĕç тăрăх йышăннă решенине пăрахăçа кăларма ыйтнă, мĕншĕн тесен вăл çав судăн решенийĕнче хăшпĕр процессуальнăй нормăсене пăснине тупнă. Кассаци сучĕн пĕрремĕш секцийĕ çак ĕç пирки хăйĕн решенине çак уйăхăн вĕçĕнче йышăнасса кĕтеççĕ».

Америка бомбардировщикĕсем Лилль районне тапăннă

ЛОНДОН, октябрĕн 9-мĕшĕ. (ТАСС). Англин информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, паян ирхине американецсен 100 бомбардировщикĕ ытла Лилль районне вĕçсе кайса тапăннă, çав самолетсен шутĕнче «Вĕçекен крепость» йышши самолетсем те нумай пулнă.

ЛАПКА ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

МЕЛЬБУРН, октябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Олэн-Стэнли секторĕнче союзниксен войскисем çаплах малалла куçса пыраççĕ. Вĕсем ку района пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех йышăнса илнĕ, халĕ ту çинчи хăшпĕр участоксем кăна вĕсен аллинче мар. Çапла, союзниксен войскисем халĕ Кокода патнелле каймалли пункт патне çитнĕ. Ку районра пурăнакан çынсем çапла калаççĕ: японецсен умне пысăк йывăрлăхсем тухса тăнă, ку район тикĕс мар, союзниксен авиацийĕ активлăн çапăçма пуçланă пирки боеприпассем тата çимелли продуктсем çитми пулнă, тропикăри чирсем сарăлма пуçланă. Çав йывăрлăхсенчен хăраса японецсем ку районран йăлтах тухса кайнă, теççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс-çар министерстви пĕлтернĕ тăрăх, японецсем Алеутски архипелагăн хĕвеланăç пайĕнче хăйсем малтан йышăнса илнĕ Атту тата Агатту утравĕсем çинчен тухса кайнă.

Çĕлене вĕлермелле

Нимĕç фашисчĕсем пирĕн çĕршыва вутпа та хĕçпе килсе кĕчĕç.

Вĕсем этем сăнне йăлтах çухатнă. Этем шутне кĕмеççĕ вĕсем! Вĕсен ун пек тивĕç çук, пулас та çук! Çавăнпа та, фашистсене пĕтермелле, пĕтермелле, пĕтермелле!—тет хĕçпăшалланнă совет халăхĕ.

Фашистсем камне, вĕсем мĕнлине совет çыннисем лайăххах пĕлеççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче оккупациленĕ районсенчи çынсем нимĕç фашисчĕсен пусмăрне, вĕсен ирсĕр мăшкăлне тӳссе курчĕç.

Калама çук ирсĕр мăшкăл! Ун пек мăшкăла, фашистсем пирĕн пата илсе килнĕ хурлăха, тискерлĕхе этемлĕх историйĕ нихăçан та курман. Фашистсем хăйсен ирсĕрлĕхĕсемпе Чингис-ханран та, нимĕç «йытă-рыцарĕсенчен» те иртсе кайрĕç.

Фашистсен вăрă-хурахла, юнĕçенле ĕçĕсем çинчен оккупациленĕ районсенче пулнă çынсем тĕлĕнмелле сăмахсемпе каласа параççĕ. Çакăн çинчен фронта та красноармеецсем патне çырусем килеççĕ. Ывăлĕсем патне—ашшĕ-амăшĕсем, упăшкисем патне—арăмĕсем, ашшĕсем патне—ачисем, пĕтĕм чун-чĕрепе хумханса, нимĕçсене тарăхса, фашистсен тискер ĕçĕсем çинчен çыраççĕ.

* * *

Смоленск облаçĕнчи Болотурово ятлă ялтан Мария Беспалова хăйĕн упăшки патне фронта çапла çырать:

«Юратнă упăшкам, эпир тӳссе курнисене никам та ан куртăр. Пурне те çырса пама халлăм та çитмест. Фашистсем пирĕн чĕресенче хăварнă хура йĕр нихăçан та шуралаймĕ. Эпир, сывă юлсан, ватăлса виличчен, фашистсен мăшкăлне нихăçан та, нихăçан та манмăпăр.

Фашистсем пирен ялта темиçе уйăх пурăнчĕç. Çуркунне совет çарĕсем çитрĕç. Каçхине килчĕç вĕсем. Çак каçхине мĕн-мĕн пулнисене каласа парас тесен, нумай çырас пулать. Хĕрлĕ Çар çывхарса килнĕ чухне, фашистсем çĕр хута тарма тытăнчĕç. Эпир тĕлĕнсе хытсах кайрăмăр. Ухмаха ернĕ, этем сăнне çухатнă офицерсемпе салтаксем кĕтессерен кĕтессе чупаççĕ. Мĕн алла лекет, çавна илеççĕ: витре-каткасене, кĕпейĕмсене, ача кипкисемпе тутрисене илчĕç, пуртăсене, пăчкăсене, çĕçĕсене пухса чикрĕç, тимĕр кăмакана вучĕ-мĕнĕпех йăтса тухрĕç... Кил-çурта çунтарса яраççĕ пулĕ терĕмĕр. Чăнах та, пĕтĕм ял çунчĕ, йĕри-тавра вут-çулăм çеç вĕлкĕшрĕ. Пирĕн пӳрт темĕнле майпа тытăнса юлчĕ. Каласан ĕненес çук, пирĕн стена çумĕнче кивĕ сехет пурччĕ, ăна та пулин илсе кайрĕç. Пĕр салтакĕ стена çинчи пăтасене кăлара-кăлара илчĕ, хăшне-пĕрне пĕренесенчен йывăççи-мĕннипех тăпăлтарса илчĕ... Пирĕн хаклă тăванăмăрсем, Хĕрлĕ Çарăн паттăр боецĕсемпе командирĕсем яла пырса кĕрсен, чĕремĕрсем лăпланчĕç, ирĕклĕх сывлăшĕ—усă та тăван сывлăш килсе кĕчĕ. Калама çук хытă савăнтăмăр. Нихăçан та, нихăçан та эпир ун пек савăнман. Савăнса хĕпĕртенипе: ку тĕлĕк мар-ши?—тесе шутларăмăр. Ку чăн пурнăç пулчĕ. Çавăнпа та пĕтĕм халăх хĕпĕртесе кăшкăрса чупрĕ:

— Сыва-и, хаклă тусăмăрсем, сывă-и, ирĕке кăларакансем! Ирсĕр нимĕçсене хăвалăр, пĕтерĕр, пĕтерĕр!.. тесе пĕтĕм чĕререн кăшкăртăмăр».

* * *

Тула облаçĕнчи, Епифань районĕнчи Пестово ялĕнчен Г. М. Черногаев хăйĕн ывăлĕ патне фронта çырать:

«Вася, нимĕçсем пирĕн яла каçхине килчĕç. Çав каçхинех çаратма тытăнчĕç, кӳршĕри ялсене те кайма пуçларĕç. Çак вăхăтра ĕнтĕ пирĕн килсене пусмăрлăх, выçлăх килсе кĕчĕ. Пирĕн яла ним хăварми çаратрĕç. Хамăр кĕлетрен икĕ михĕ ыраш илсе тухрĕç. Пӳрт лартма хатĕрленĕ йывăç-хăмисене çунтарса ячĕç, çурт-йĕрсене аркатса тăкрĕç.

Вася, санăн шăлну Леня (халĕ вăл икĕ çулта) пĕррехинче çиес килнипе макăрса çăкăр ыйтрĕ. Нимĕç салтакĕсем ăна кăкăртан ярса тытрĕç те урама юр ăшне кăларса ывăтрĕç. Икĕ хутчен çавăн пек турĕç.

Пирĕн ялта фашистсен тыткăнĕнчен тарса килекен красноармееца персе вĕлерчĕç. Унăн кĕлеткине шкул умĕнче, çăл патĕнче, темиçе кун вырттарчĕç.

Колхозник Яшин Г. М. армантан килет мĕн. Унăн çуни çинче икĕ пăт çăнăх пулнă. Фашистсем ăна тапăннă. Яшин çăнăхне вĕсене парасшăн пулман. Урнă фашистсем ăна çул çинчех персе вĕлернĕ.

Арловка ялĕнче 14 çынна персе вĕлернĕ. Ракитино ялĕнче пĕр хĕрарăма—ялсовет председательне тата унăн вунултă çулхи ывăлне асаплантарса вĕлерчĕç. Колодези ялĕнче 35 çынна персе пăрахрĕç.

Нимĕçсем килнĕ чухне эпĕ колхоз выльăхĕсем патĕнче пултăм. Ман çинчен: вăл колхоз выльăхĕсене хăваласа тарнă, колхоз председателĕ пулнă, тесе каласа панă темĕнле йытă. Унăн амăшĕн çăмата пур, тесе элек панă тата. Кайран пĕлтĕм—çавăн пек элеклекенĕ кулак ывăлĕ пулнă. Фашистсем мана хупăрласа илчĕç те пăшалпа тĕллесе: кӳр часрах çăматтуна!—теме тытăнчĕç. Аран-аран хăтăлкаласа юлтăм.

Хамăр кӳршĕри Татьяна инкӳнне сĕт паманшăн икĕ куçне те туяпа чиксе шăтарчĕç. Халĕ вăл сĕм-сукăр çын пулса юлчĕ.

Ванюкăнне урамрах çĕлĕкне хывса илчĕç. Хăйне вĕлерес пек хĕнерĕç.

Ну тата, Вася, пĕр-икĕ сăмах хамăр район хули çинчен. Епифань хулине халĕ курсан та пĕлес çук. Фашистсем ăна пĕтĕмпех аркатса, ишсе тăкрĕç.

Хĕрлĕ Çар килнĕ чухне, фашистсем пирĕн тăрăхри ялсене çунтарма пуçларĕç. Вĕсем пирĕн яла çунтарма ĕлкĕреймерĕç. Анчах та пирĕн ялта пĕр тĕрĕс-тĕкĕл çурт та юлмарĕ.

Вася, хытăрах хăвалăр çав ирсĕр йытăсене! Çынсем мар вĕсем, çавăнпа та çĕлене вĕлернĕ пек вĕлерĕр вĕсене».

* * *

Беспалов, Черногаев красноармеецсем çак çырусене хăйсен юлташĕсене вуласа пачĕç. Кашни красноармеец, кашни командир итлесе тĕлĕнчĕ, фашистсене хаяррăн пĕтерме кирли çинчен каларĕ.

— Фашистла вăрă-хурахсем пире чура тăвасшăн, пирĕн çĕршывăн ирĕклĕхне пĕтересшĕн. Çук, вăл пулаймĕ! Фашист—вăл çĕлен, çĕлен сăхать,—ăна вĕлермелле!—терĕ Беспалов хăйĕн арăмĕн çырăвне вуласа тухнă хыççăн.

Тĕрĕс сăмах! Çĕлене вĕлермелле! Çĕлен пирĕн ачасем патне, йăмăк-аппасем патне, юратнă арăмсем патне, тăван атте-аннесем патне, мамак-маçаксем патне хăйĕн наркăмăшлă сăннине тăсса пырать пулсан, çĕлен пирĕн тăван çĕршыв çине явкаланса килет пулсан,—пирĕн сăмахăмăрсем кĕске:

— Çĕлене вĕлермелле!

В. ДОЛГОВ.

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Чебоксарский филиал ЭНЕРГОТРАНСУЧТЕКСТИЛЬ НАРОДНОГО КОМИССАРИАТА ТЕКСТИЛЬНОЙ ПРОМЫШЛЕННОСТИ СССР с 10 по 25 октября 194. года ОБЪЯВЛЯЕТ ПРИЕМ НА КУРСЫ ПОДГОТОВКИ ШОФЕРОВ III КЛАССА

Обучение на курсах бесплатное как для отдельных граждан, так и для предприятий, командировавших на курсы своих работников.

Срок обучения на курсах с отрывом от производства 1,5 месяца, без отрыва от производства 3 месяца.

На курсы подготовки шоферов принимаются мужчины и женщины не моложе 17,5 лет, имеющие образование не ниже 4 х классов.

Срок подачи заявлений с 10 по 20 октября. Начало занятий 25 октября с/г.

За всеми справками обращаться в канцелярию филиала: г. Чебоксары, ул. Володарского, д. № 5, II й подъезд, с 9 до 20 часов ежедневно, кроме общевыходных дней.

2—1. ДИРЕКЦИЯ.

На постоянную работу требуются: 2 ответисполнителя по снабжению, бухгалтер, кладовщик.

Об условиях справляться: г. Чебоксары ул. Урицкого, дом № 15, Наркомпищепром

Чувашской Республиканской Заготживконторе

На постоянную работу требуются: старший зоотехник, счетовод, старший конюх и конюхи.

Обращаться по адресу: г. Чебоксары, Учительская ул., д. 39, ЗАГОТЖИВКОНТОРА.

Чебоксарский Коммунально-Строительный техникум доводит до сведения студентов II, III и IV курсов, а также студентов, принятых на 1 курс, что занятия начались 7 октября. Студенты, не явившиеся до 15 октября, будут отчислены из техникума.

ДИРЕКЦИЯ.

ЗАВОДУ ТРЕБУЮТСЯ:

инженеры и техники-технологи по холодной обработке металла, снабженческие и складские работники, бухгалтеры и машинистки, мастер по камен. и штукатурн. работам, строит. десятник, коменданты общежитий.

Квалифицированные рабочие: токари, фрезеровщики, револьверщики, строгальщики, автоматчики, шлифовщики, слесари, электро-монтеры, штамповщики, установщики штампов, электро-сварщики, резчики, прессовщики, лаковары, литейщики, модельщики, шорники-смазчики, маляры, каменщики, печники, штукатуры, плотники, столяры, упаковщики-плотники, подсобные рабочие, грузчики, свинари, уборщицы, дворники, сторожа, шофера, автослесари, такелажники, жестянщики.

Требуются вахтеры и пожарные работники.

Принимаются переквалификанты (ученики от 16 лет) по указанным специальностям.

Обращаться: улица Карла Маркса, 80, бюро пропусков, от 11 до 3 час. дня.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0-67, редакци секретарĕн — 4-26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3-99, ялхуçалăх пайĕн — 5-31, издательство конторин — 0-23.

НТ 952 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф. 6. 53 84 п. л.